25-мĕш çул тухать; Хакĕ 20 пус

1943
ЯНВАРЬ
17
ВЫРСАРНИКУН
31(6250) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрман ĕçĕсен хăвăртлăхне ÿстермелле

Çĕршывăн фронт умĕнчи тивĕçе туласа, пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕн работникĕсем иртнĕ çулта начар мар ĕçлерĕç. Вĕсем 1942 çулта вăрман материалĕсене хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана срокчен тултарчĕç, чугунçул транспорчĕ валли вутă тăратмалли задание те ăнăçлă вĕçлерĕç. Йĕпреç, Шупашкар, Вăрнар, Улатăр, Калинински, Вăрмар, Кувакински, Çĕмĕрле тата Ишлей районĕсем чугунçул кирлĕ вутă срокчен хатĕрлесе турттарса тухрĕç. Шăхасан, Шăмăршă тата Чкаловски районсем шкулсемпе учрежденисене валли тăваттăмĕш кварталта вутă хатĕрлемелли тата турттармалли плансене вăхăтра тултарчĕç.

Пирĕн вăрман промышленноçĕн работникĕсем умĕнче çак çул татах та пысăкрах, ответлăрах задачăсем тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн васкавлă заказĕсене вăхăтра туса пани пĕрлех, вăрман хатĕрлекен предприятисен кăçал чугунçул транспорчĕ валли сахал мар вутă хатĕрлемелле, турттарса кăлармалла. Çак ĕçсене вăхăтра тăвас пулсан, пирĕн вăрман промышленноçĕн работникĕсен иртнĕ çулхи çитĕнÿсемпе çырлахса ларма юрамасть, кăçал татах та хăвăртрах ĕçлемелле. Анчах вăрман хатĕрлекен чылай предприятисем халĕ çитерĕксĕр хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ, вĕсем пĕлтĕр тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пăхаççĕ. Чăваш АССР Вăрман промышленноçĕн предприятисем вутă хатĕрлемелли плана январĕн малтанхи 12 кунĕ хушшинче хатĕрлесе 5,6 процент, турттарса çеç 4,8 процент тултарнă.

Вутă хатĕрлес ĕçĕн хăвăртлăхĕсем çакăн пек çитсĕлĕхсĕрри, чи малтан, леспромхозсем вăрман заводĕсем ĕçе хĕллехи условисене юрăхлă пек организацилеменнипе, вăрманта ĕçлекен çынсем пĕрмаях улшăна тăнинчен килет. Вăрман промышленноçĕн ертсе пыракан работникĕсем çак çитменлĕхсене хирĕç ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, транспорт средствисемпе, механизациленĕ çулсемпе тулли усă курмалла. ВКП(б) Обкомĕн 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче пулса иртнĕ XIII-мĕш пленумĕ вăрман ĕçĕсен ертсе пыракан работникĕсене механизацилене транспорт çине ытларах тимлĕх уйăрма хушрĕ. Анчах чылай леспромхозсен руководителĕсем пленумăн çак кăтартăвне пурнăçа кĕртмеççĕ. Транспорт средствисемпе пур таран усă курмаççĕ, уйрăмах Хĕрлĕ Чутайри тата Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман çулĕсемпе усă курмаççĕ.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçе халăхăн вăхăтра çÿрекен пыни вăрманти ĕçлекенсене кирлĕ ĕç вăйне районсем çитĕнлĕхсĕр тăратнинчен те килет. Районсен партипе совет организацийĕсем çакна ăнланса илме вăхăт: чугунçул валли вутă хатĕрлесси — оборонăллă питех те пысăк ĕç. Çак ĕçĕн ăнăçлă, хĕрлĕ шайĕнче пулассăй, вăйне çитерсе тăратассинчен килет. Кăна эпир Йĕпреç, Шупашкар тата Улатăр районĕсен иртнĕ çулхи примерĕнчен куратпăр. Унти партипе совет органĕсем вăрманта ĕçлеме кирлĕ лашасемпе çынсене йышлăрах уйăрса панă пирки, çав районсем вутă хатĕрлемелли заданине срокчен тултарчĕç.

Анчах халăхăн вăхăтра вăрманта ĕçлемелли çынсене лашасене чылай районсем пачах та çитеслĕхе уйăрса параççĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе Чкаловски, Çĕрпÿ, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсем юлса пыраççĕ. Ку районсенче вăрмана пĕлтерĕшлĕ ĕçлемелли пайне те вăрманта ĕçлемест. Чкаловски районĕн, сăмахран, лашапа 145 çын, çурран 120 çын ĕçлемелле. Халĕн вăхăтра унта çурран 34 çын çеç ĕçлет. Тăвай районĕнче те çавах. Вăрман хатĕрлеме ку районсенче çынсене кăларса тăма лайăх йĕркелемен, хатĕрлев пунктĕсем вăхăтра тăваттăмĕш кварталта вутă хатĕрлемелли тата турттармалли плана республикăри районсем тултарма пымаççĕ.

Çак çитменлĕхсем текех тÿсме çук. Мĕншĕн тесен районсем ĕçе вăйне çитерсе тăратсан вăрман хатĕрлемелли хĕллехи планне тултарассине çирĕплетсе тăма пулать. Вăрман промышленноçĕн работникĕсем ĕçе хĕллехи условисене юрăхлă пек йĕркелемелле, хĕллехи вăхăтра ĕçлемелли тата тăрантармалли плана пĕтĕмпех тултарма хатĕрленмелле. ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ районсен парти организацийĕсене вăрман хатĕрлев ĕçне хăйсен çирĕп контролĕ айне илме хушрĕ. Райсоветсен исполкомĕсем вăрман ĕçне ĕçлекен çынсемпе лашасене çитерсе тăма тивĕç.

Мобилизациленĕ ĕç вăйне вăрмана кăларасси—çур ĕç кăна, вĕсене сезонра заводне тултарничченех çирĕплетсе тăмалла, ĕç вăйĕ улшăна тăнине пĕтермелле, вăрмана ĕçлеме кăларнă çынсене пурăнма лайăх условисем туса памалла. Вăрман промышленноçĕн предприятисен руководителĕсем рабочисене кирлĕ пек условисем туса памалла. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем колхозниксене вăрмана ĕçе апат-çимĕç продукчĕсем çитерĕ парса тăмалла пулать.

Леспромхоз руководителĕсем партин организацийĕсем вăрманта ĕçлекен хушшинчи партиллĕ-политикăллă тата агитацилле-массăллă ĕçе вăйлатмалла.

Çĕршывра халĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумĕ сарăлса пырать. Малта пыракан фабрикăсемпе заводсен коллективĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, вĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстерсе, пахалăхне лайăхлатма, çĕршывăн Хĕрлĕ Çар валли ытларах продукци туса кăларма пулăшаççĕ. Республикăри вăрман промышленноçĕн работникĕсем те ăмăрту тулашĕнче юлмалла мар, вĕсен ку тĕлĕшпе Улатăр леспромхозĕн вăрман турттаракан стахановецĕ Егоров юлташран пример илмелле. Стахановец Егоров юлташ иртнĕ çулăн иккĕмĕш çурринче вутă турттармалли нормăсене кунсерен 200 процент тултарса пычĕ. Анчах вăл çак çитĕнÿпе лăпланса ларма шутламасть. Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, çак çулăн пĕрремĕш кварталĕнче вăл тата 700 кубометр вутă турттарса кăларма сăмах парать. Вăрман промышленноçĕнчи пур работниксем Егоров юлташ пек ĕçлесен, транспорт валли иртнĕ çулхинчен нумай вутă турттарса пама пулать, вутă турттарас ĕçĕн хĕллехи планне срокчен тултарма пулать. Вăрман промышленноçĕнчи мĕнпур работниксен, Егоров стахановецран пример илсе, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, нормăна кашни кун ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле. Социализмлă ăмăрту вăрман ĕçĕсен хĕллехи планне срокчен тултарма пулăштăр.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 15-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Çурçĕр Кавказра** наступлени туса пырса **Благодарное** хулипе чугунçул станцине, **Александровское** хулине, **Солуно-Дмитриевские** ятлă район центрне, **Садовое, Нагудское, Бекешевское** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Нагудская** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Çурçĕр-Донец районĕнче пирĕн войскăсем **Литвиновка** ятлă район центрне, **Грудинов, Самбуров, Вязин, Поцелуев, Бородинов, Ерофеевка** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Глубокая** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Зимовники районĕнче пирĕн войскăсем **Орловская** ятлă район центрне, **Батаевская, Московский, Татников, Рябка, Денисовский, Новая Надежда, Атамановский, Греков, Красное Знамя, Луганский, Быстрянский, Потемкинский, Кундреченский** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Двойная, Куренный** ятлă чугунçул станцийĕсене тытса илнĕ.

* * *

Январĕн 14-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсем тата грузсем тиенĕ 60 автомашинăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен тата горючин 3 складне сирпĕнтерсе янă. Противникăн икĕ ротăна яхăн пехотине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕ штурмлакан отрядсем противникăн контратакисене сирсе ярса 600 метр малалла кайнă. Гитлеровецсен чон тата темиçе урама тасатнă. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 100 ытла огневой точкипе блиндажне пĕтерсе тăкнă, темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ.

Пирĕн летчиксем противникăн аэродромĕсем çинче унăн 7 самолетне пĕтерсе тăкнă тата сывлăшри çапăçусенче 3 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, наступлени туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен халăх пурăнакан тата темиçе пункта хăтарнă. Хаяр çапăçусенче 400 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем иртнĕ кун çухатнă паха рубежа каялла тытса илме хăтланнă. Противникăн пур контратакисене те сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ.

* * *

Центральнăй фронтра, Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн войскăсем противникăн контратакисене сирсе ярса ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ, пур колхозсем.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, ăнăçлăн наступлени туса пынă. Советсен çăмллăн куçакан отрячĕсем тăшман войскисен тылне нумай шала кĕрсе каяççĕ те унăн коммуникацийĕсене çĕмĕреççĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем çапăçса пырса малалла кайнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тата чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем совет войскисене малалла кайма чарма хăтланнисене пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă, противника аркатса тăкнă. Нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити, 7 танкне, 10 орудине тата 12 бронетранспортне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă. Пирĕн чаçсем 36 танк, 1.200 автомашина тата автомашинăсем тиенĕ 3 эшелон, обмундировани тата продовольстви тиенĕ 5 эшелон, выльăх-чĕрлĕх тиенĕ эшелон, 10 паровоз, 200 вагон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн малти отрядсем халăх пурăнакан пысăк пункт патне пырса тухнă та тăшманăн гарнизонĕпе çапăçу пуçласа янă. Нимĕçсен 13 танкне тытса илнĕ тата 400 çынна ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен белорусс партизанĕсен отрячĕ çапăçура нимĕçсен 96 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Нумай гитлеровеца амантнă. Çапăçу хирĕнче персе çĕмĕрнĕ бронемашина тата стройран кăларнă танкетка выртса юлнă. Гомель облаçĕнчи партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне сасартăк тапăннă та 40 нимĕçе вĕлернĕ. 3 пулемет, 30 винтовка, 8 револьвер тата боеприпассем туртса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 6-мĕш танковăй дивизийĕнчи 114-мĕш мотострелковăй гренадерски полкран Хĕрлĕ Çар енне салтаксен пĕр ушкăнĕ куçнă.

Тыткăна лекнĕ Альферд М., Генрих Н. Вильгельм К. тата ыттисем те çакна каласа панă: «Пирĕн дивизи юлашки вăхăтра Францире тăчĕ. Кунта полксене çителĕклĕ таран тултарчĕç те вăрçă ĕçне вăйлăн вĕрентрĕç. Ку дивизи кăнтăр Францири малтан оккупацилемен районсене йышăнса илет пуль тесе шутлатчĕç. Анчах та кĕтмен çĕртен ĕç пĕтĕмпех улшăнса кайрĕ. Ноябрь вĕçленнĕ тĕле пире васкавлăн Российăна ячĕç. Пире хăш участока ярассине эпир пĕлместĕмĕрччĕ, анчах шухăш-кăмăлсем пурин те питĕ начарччĕ. Фронта пирĕн дивизи умне ытти соединенисемпе пĕрле Сталинград патĕнче хупăрланă войскăсем патне татса кĕрсе вĕсене хăтарас задача лартнăччĕ. Командованин приказĕ тăрăх раштавăн пĕрремĕш кунĕнче эпир Сталинградра пулмаллаччĕ. Темиçе кун пынă çапăçусенче пирĕн дивизи 60 танк çухатрĕ тата калама çук пысăк çухатусем тÿсрĕ. Пирĕн умма икĕ ыйту тухса тăчĕ; е вилмелле, е вăрçăран хăтăлмалла. Эпир калаçса татăлтăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

Январĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Çурçĕр Кавказра, Дон** шывĕн анатри районĕнче тата **Çурçĕр Донец** районĕнче малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем, малалла куçса, тĕреклетнĕ темиçе çурта тытса илнĕ. Нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла, 6 орудине, миномётсен 3 батарейине тата 26 огневой точкине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин роти контратака тунă, анчах та ăна пирĕн подразделенисем, пулеметсемпе тата минометсемпе персе, пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем оборонăн пĕр тăрăхне питĕ вăйлă тĕреклетнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем противникăн укреплениĕсем патне флангсенчен пырса, унăн оборонине йĕркерен кăларнă, гитлеровецсене пысăк çухату тÿстернĕ. Пирĕн чаçсем противника хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра, Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре; артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн противникăн пехотипе танкĕсем Н-ски чаçăн позицийĕсене атакăланă. Пирĕн артиллеристсем хăйсен орудийĕсене уçă позицисене илсе тухнă та нимĕçсен 4 йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ. Штык вĕççĕн çапăçса, пирĕн боецсем танксен хÿтĕлĕхĕсĕр тăрса юлнă нимĕç пехотине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче противникăн 180 вилли выртса юлнă.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем çапăçса пырса малалла куçнă. Хоменко юлташ ертсе пыракан боецсем тăшман пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, 29 автомашина тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, противникăн продовольстви тиенĕ поездне, 4 орудине, 10 минометне тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илсен нимĕçсенчен 10.000 пуç майракаллă выльăх тытса илнĕ, гитлеровецсем вĕсене хресченсенчен туртса илнĕ пулнă.

* * *

Çурçĕр Кавказра кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 3 бронемашинине, автомашинине, 2 радиостанцине пĕтерсе тăкнă, горючин пысăк складне çунтарса янă. Партизансем нимĕç чаçĕн ялавне тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Курск хулинче тискер ĕçсем туни çинчен хыпар килнĕ. Нимĕç захватчикĕсем хулари мирлĕ пурăнакан халăха вĕлерсе пĕтереççĕ. Гитлерла палачсем декабрь уйăхĕнче кăна 500 çынна ытла асаплантарса е персе вĕлернĕ. Ноябрь пуçламăшĕнче гестаповецсем совет интеллигенцийĕ хушшинче нумай çынна арестленĕ. Арестленисене асаплантарнă. Фашистла ирсĕрсем научнăй сотрудника Тимофеева паллайми тăвасчен асаплантарса пĕтернĕ те унăн виллине мăшкăлтăк шăтăкне пăрахнă. Михаил Соколов учителе бандитсем çакса вĕлернĕ. Ытти арестленисен кунçулĕ çинчен пĕр хыпар та çук. Хула кунсерен пушанса пырать. Нимĕçсем çур çул хушшинче Германие нумай пин çынна каторгăлла ĕçе хăваласа кайнă. Хулара юлнă халăха гитлеровецсем йывăр ĕç ĕçлеме хăваласа тухаççĕ. Ĕçлекенсене çăкăр та памаççĕ. Куллен вуншар çын выçăпа антăраса вилет.

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсем Нант районĕнче нимĕçсен горючи складне сирпĕнтерсе янă. Лилль сывăхĕнче хĕçпăшалланнă французсен ушкăнĕ танксем юсакан мастерскоя аркатса тăкнă, юсаса çитернĕ 6 вăтам танка стройран кăларнă. Амьен сывăхĕнче француз патриочĕсем нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă.

Трактороене юсас тĕлĕшпе 1942 çулхи тăваттăмĕш кварталта МТС-сем хушшинче пулса пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Елчĕк МТС-не парас, вăл 1942 çулхи тăваттăмĕш кварталта тракторсем юсамалли плана 139,1 процент тултарнă, вăл шутран капитальнăй ремонт планне — 214 процент, текущи ремонт планне—105 процент тата тракторсене техника енĕпе пăхса тăрас плана — 160 процент тултарнă. Елчĕк МТС-ĕн директорне П. А. Яшин юлташа, Елчĕк МТС политотделĕн начальникне Г. Ф. Михеев юлташа тата Елчĕк МТС-ĕн старши механикне В. П. Павлов юлташа пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми парас.

Тракторсене юсанă çĕрте палăрнă чи лайăх работниксене тата трактористсене премилеме Елчĕк МТС директорне 5.000 тенкĕ укçа парас.

2. 1942 çулхи тăваттăмĕш кварталта тракторсене юсас тĕлĕшпе Канаш МТС-ĕ (директорĕ Зайцев юлташ, МТС политотделĕн начальникĕ Б. Ф. Кукушкин юлташ, старши механикĕ В. И. Толкачев юлташ), Элĕк МТС-ĕ (директорĕ И. В. Яхваров юлташ, политотдел начальникĕ Ф. М. Макаров юлташ, старши механикĕ К. И. Майоров юлташ), Вăрнар МТС-ĕ (директорĕ П. О. Осипов юлташ, политотдел начальникĕ А. С. Ягодкина юлташ, старши механикĕ В. Ф. Ремизов юлташ), Комсомольски МТС (директорĕ Ш. Ширгатдинов юлташ, политотдел начальникĕ А. Г. Долгов юлташ, старши механикĕ П. А. Кудрявцев юлташ), Шăхасан МТС (директорĕ Н. Константинов юлташ, политотдел начальникĕ В. С. Ижутов юлташ, старши механикĕ И. Н. Северов юлташ) тата Шупашкар МТС-ĕ (директорĕ Федоров юлташ, политотдел начальникĕ Смирнов юлташ, старши механикĕ Д. А. Леонтьев юлташ) лайăх ĕçленине палăртас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председатель заместителĕ **Ф. СЕМЕНОВ.**

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

Танксем тума республикăра 45.439.000 тенкĕ хывнă

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем хушшинче Хĕрлĕ Çар валли танксем тума укçа пухас ĕç малалла пырать. Январĕн 16-мĕшĕ тĕлне республикăра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 43.449.000 тенкĕ, «Тракторист Чувашии» колоннине тума 1.990.000 тенкĕ пухса Госбанкăн отделенийĕсене хывнă.

Танксем тума укçа пухас ĕçре çак районсем малта пыраççĕ: Пăрачкав районĕ 3.288.000 тенкĕ, Улатăр районĕ 2.892.000 тенкĕ, Шупашкар районĕ 2.520.000 тенкĕ, Вăрнар районĕ 2.137.000 тенкĕ тата Чкаловски район 2.074 000 тенкĕ пухнă.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии“ эскадрильине тума 3.072.000 тенкĕ пухнă

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Январĕн 15-мĕшĕ тĕлне Госбанкăн районсемпе хуласенчи отделенисене 3.072.000 тенкĕ хывнă.

Самолетсем тума укçа пухас ĕçре çак районсем малта пыраççĕ: Чкаловски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Черенкова юлташ) — 700.000 тенкĕ, Шупашкар хули (ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Охандерова юлташ)— 312.000 тенкĕ, Октябрьски район (Чурмакова юлташ) — 208.000 тенкĕ, Вăрнар районĕ (Поляева юлташ) —200.000 тенкĕ, Шупашкар районĕ (Смирнов юлташ) — 150.000 тенкĕ тата Первомайски район (Николаева юлташ) — 125.000 тенкĕ.

Çак районсем юлса пыраççĕ: Кувакински район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Ушкова юлташ) — 10.000 тенкĕ, Йĕпреç районĕ (Николаев юлташ)— 19.000 тенкĕ, Тăвай районĕ (Яковлева юлташ) — 14.000 тенкĕ тата Улатăр хули (ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Шепелява юлташ) — 29.000 тенкĕ.

Боевой самолетсем тума 58 пин тенкĕ панă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, январĕн 14-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинче пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Паянхи куна самолетсен эскадрильине тума комсомолецсемпе çамрăксем пурĕ 58 пин тенкĕ пухнă. Районри больницăра ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем самолетсен эскадрильине тума 4.500 тенкĕ пачĕç. Комсомолка медсестра Косарева юлташ 1.500 тенкĕ пачĕ.

«Профинтерн» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 8.000 тенкĕ пухнă, комсомол организацин секретарĕ Ольга Кагайкина 600 тенкĕ панă.

Боевой самолетсен эскадрильине тума укçа пухас ĕç пур колхозсенче те сарăлса пырат...

А. АЛЕКСЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кушар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 43 центнер тĕштырă хывреç. Колхозник Нестеров юлташ 3 пăт, ватă колхозница Степанова юлташ 2 пăт çурă тырă пачĕç.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçул транспорт работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ Улатăрти паровозсем юсакан завода (завод директорĕ Крупский, партбюро секретарĕ Шерстюк, завком председателĕ Демидов юлташсем) иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче лайăх ĕçленĕ тесе палăртнă, ÇУЛЙĔР ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН КУÇСА ÇÿРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВНЕ ЗАВОД АЛЛИНЧЕХ ХĂВАРМА тата ăна ИККĔМĔШ ПРЕМИ ПАМА йышăннă.

Цехсен обязательствисем

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 15-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ завод коллективĕн чĕнĕвне комбинатри цехсенче пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ. Цех коллективĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе татăклă обязательствăсем илеççĕ. Абушахмин юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ январьти ĕç планне 110 процент тултарма, ĕç тухăçлăхне 3 процент ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 2 процент чакарма, электроэнергине лимитпа пăхнинчен пĕр процент перекетлеме, рационализаторла сĕнÿсем 15-рен кая мар пама, çĕнĕрен 15 рабочи вĕрентсе хатĕрлеме обязательство илчĕ.

Çирĕп график тăрăх ĕçлеççĕ

КАНАШ, январĕн 16-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртура вагонсем юсакан заводри малта пыракан цехсем ĕç хăвăртлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Забиякин юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ, талăкри çирĕп график тăрăх ĕçлесе, продукци туса кăларассине кунран кун ÿстерсе пырать. Токарев юлташ цехĕнчи хĕрлĕ ялавлă смена та (смена начальникĕ Князев юлташ) продукцие графикпа пăхнинчен ытларах туса кăларать. Кунти токарьсем Кисляков, Скрыпник тата Андреев юлташсем кунсерен 2—3-шер норма тултараççĕ.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Мари республикин делегацийĕ пирĕн республикăра

Иртнĕ çулти çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра пирĕн республика ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырас тĕлĕшпе Мари тата Мордва АСС Республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ, ăмăрту договорне алă пусса хăй çине конкретнăй обязательствăсем илчĕ. Ăмăрту договорне пирĕн республика пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине палласа майпа, январĕн 14-мĕшĕнче Шупашкара Мари АССР делегацийĕ килчĕ. Делегацие ВКП(б) Мари Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийĕн заместителĕ **С. П. Дыганов** юлташ ертсе пырать. Делегаци составĕнче Мари АССР Наркомземĕн Политсектор начальникĕн заместителĕ В. А. Заболоцкий, ВКП(б) Еласовски райкомĕн секретарĕ Г. С. Меряков тата Пектубайски районри «Чирки» колхоз председателĕ В. Д. Орехов юлташсем пур.

Делегаци ĕнер республикăри районсене тухса кайрĕ.

Тракторсене юсас ĕçри пирĕн опыт

Пирĕн Шăхасан машинăпа-тракторлă станцинче тракторсене ремонтлас ĕç аванах пулса пырать. Эпир тракторсене октябрь уйăхĕнче юсама тытăнтăмăр. [illegible]

[illegible]

А. СЕВЕРОВ,
Шăхасан МТС-ĕн старши механикĕ.

Вăрлăх хатĕрлесси—малти вырăнта

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Коммунизм» колхоз правленийĕ кăçалхи çураки валли вăрлăх хатĕрлес ĕçе чи малти вырăна хучĕ. Вăрлăхлăх уйăрнă тырра сортласа тасатма ятарласа бригада организациленĕ.

Бригада куллен иртен пуçласа каç-ченех тырă сортлать. Паянхи куна пурĕ 76 центнер вăрлăхлăх тырра сортласа тасатнă. Тулă тата пăрçа вăрлăхĕсене 100 процентпех тасатса хунă.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

Çураки вăхăтĕнче ачасен яслисене уçма хатĕрленер

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çураки çывхарса килет. Пирĕн республика çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнчĕ ĕнтĕ.

Кăçал çуркунне тата çулла, иртнĕ çулти пекех, ялхуçалăх ĕçĕнче хĕрарăмсем нумай ĕçлемелле. Хĕрарăмсем хирсенче стахановла ĕçлеме пултарччăр тесен, кашни колхозрах ачасен площадкисемпе яслисене организацилени кирлĕ, унта ачасене лайăх пăхса усрама тата воспитани пама майсем тумалла.

Ачасен площадкисене уçмашкăн хатĕрленме халех тытăнас пулать, çак ĕçе шурин те хутшăнмалла.

Эпир, Шупашкар хулинчи шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлекен работниксем, ачасен площадкисене пур майсемпе те пулăшса пыма хамăр çине обязательство илтĕмĕр. Ачасемпе пĕрле, вылямалли тĕрлĕ япаласем туса хатĕрлеме халех тытăнтăмăр, вĕсем валли тетрадьсемпе рисункăсене сыхласа усратпăр, тĕрлĕ альбомсем хатĕрлетпĕр. Шупашкарти ачасен кашни сачĕ пĕрпĕр колхозри ачасен площадкине шефа илет.

Колхозсенче çураки вăхăчĕ валли ачасен площадкисене уçма хатĕрленесси—пысăк ĕç пулса тăрать. Вăл ĕçе республикăри шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлекен кашни работникăн хутшăнма тăрăшмалла. Райçĕрĕç пайĕсемпе, çĕрĕç пайĕсемпе тата сывлăха сыхлав пайĕсемпе пĕрле çуртйĕрсене, оборудованисене — сĕтел-пукансене, выртса-тăмаллисене хатĕрлемелле. Çавăнпа та эпир республикăри шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлекен пур работниксене те пирĕн примера йышăнса илме тата колхозсенче çураки вăхăтĕнче ачасен площадкисене уçма хатĕрленес ĕçе халех тытăнма чĕнетпĕр.

Шупашкар хулинчи шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлекен работниксем: БОРИСОВА, А. КИРИЛЛОВА, ИВАНОВА, МИХАЙЛОВА.

Хĕрлĕ Çар уявне çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илессишĕн

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 15-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Вăйлă тырпул туса илес пулсан, уя ытларах тислĕк тăкса çĕре çемçетме кирлине «Красный Октябрь» колхозра ăнланаççĕ. Вĕсем кашни çулах уя тислĕк, торф, минераллă удобренисем нумай кăлараççĕ. Çавăнпа вĕсен уйĕсенче тырă лайăх пулать.

Кăçал та «Красный Октябрь» колхоз членĕсем 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене вĕçленĕ хыççăнах çуракине хатĕрлеме пуçланă. Январĕн 1-мĕшĕччен колхоз уя 340 тонна тислĕк кăларнă.

Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăха хутшăнса, колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçсене тата активлăрах тума тытăнчĕç. Райзо панă план тăрăх колхозăн вунă кун хушшинче уя 150 тонна тислĕк кăлармалла пулнă, вĕсем 160 тонна кăларнă. Çак ĕçре кулленех 5—6 лаша ĕçлет. Колхоз ытти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те юлса пымасть. Çак кунсенче 35 тонна торф кăларса хатĕрлерĕ, 4 центнер кĕл, 4 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

«Подборное», «Красный Атмал» колхозсем те вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес ĕçе активлăн туса пыраççĕ. «Подборное» колхоз вунă кун хушшинче уя 150 тонна тислĕк кăларчĕ.

Асăннă колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв тĕлне пĕтĕмпех вĕçлес тесе кĕрешĕве тухрĕç.

Х. ЛИСИН.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЫРĂВĔ

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ патне Н-ски полкăн командирĕпе унăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ çыру янă. Вĕсем çапла çыраççĕ:

Пирĕн полкри боецсемпе командирсем Сире тата Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисене красноармеецла хĕрÿллĕ салам яраççĕ.

Эпир çак çырăва Сирĕн пата Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче тата Ржевпа Великие Луки хулисен районĕнче нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсене аркатса ямаллах пыра-пыра çапнă вăхăтра ятратпăр. Тăшман, хăйĕн вилĕмне курнă пирки, пирĕн çĕрĕн кашни метрĕнче тытăнса тăма тапаçланать, хăйне çĕмĕрсе тăкас куна вăраха яма тăрăшать. Анчах та вăл тăрăшни усăсăр пулĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтерес кăмăлпа çунаканскерсем, татăклă наступление каяççĕ, тăшманăн оборонине çĕмĕрсе, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе, вăл хирĕç тăнине сирсе пыраççĕ.

Пирĕн полкри боецсемпе командирсем нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсене çĕмĕрсе тăкма Сталинград геройĕсене, Центральнăй фронтра наступлени тăвакан чаçсене пулăшаççĕ. Хамăрăн фронтăн линине çирĕппĕн хÿтĕлемелле, противника малалла куçма памалла мар, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине хавшатса тата пĕтерсе пымалла, тесе Сталин юлташ кăтартса панине эпир асра тытатпăр. Кашни боецпа командир пĕр шухăшпа—çав кăтартусене пурнăçа кĕртес, çапла вара нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çĕмĕрсе тăкмалли куна çывхартас шухăшпа пурăнать. «Нимĕçе вĕлер» текен лозунг кашни боецпа командирĕн законĕ пулса тăчĕ. Вĕсем нумайĕшĕ снайпер искусствине вĕренсе çитрĕç, кашни кунах нимĕçсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Пирĕн полкри снайперсем кĕске вăхăт хушшинчех фашистсен 248 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкрĕç. Снайпер Манишкин 47 гетлеровеца, Башкатов—35, Доронин—27, Лихачев—25 фашиста вĕлерчĕç. Çак çынсемпе пирĕн полк мухтанать. Бубенцов юлташ ертсе пыракан оруди расчечĕ артиллерирен персе противник миномечĕсен темиçе батарейине вĕсен прислугисемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн полкри боецсемпе командирсем Германи фашизмне çĕнтерессине çирĕппĕн шанса тăраççĕ. Вĕсене рабочисен тылри паттăрлăхĕ, ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсемшĕн тăрăшни хавхалантарать. Сирĕн орденлă республикăри ĕççыннисем ярса панă парнесем чăваш халăхĕ пирĕн полкри боецсемшĕн тăрăшнине кăтартаççĕ.

Боецсемпе командирсем чăваш халăхне тав тăваççĕ тата çапла шантарса калаççĕ: нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкасса чăваш халăхĕ шанса тăнине эпир пулас çапăçусенче паттăр ĕçсемпе тÿрре кăларăпăр.

Полк командирĕ майор ВОЕЙКОВ.
Полк командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ майор РАДАЕВ.

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен примерĕпе пирĕн районри колхозниксем те хăйсем ĕçлесе илнĕ тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар фондне хываççĕ. Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне колхозниксем пурĕ 128 тонна тырă хыврĕç. Ку тĕлĕшпе хăшпĕр колхозсенче ĕç уйрăмах лайăх пырать. «Родина» колхоз членĕсем хăйсен тупăшĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне 27 центнер тырă уйăрса пачĕç. Çавăн пекех «Янмурзино», Сталин ячĕпе тăракан тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем те Хĕрлĕ Çар фондне 20—40 центнер тырă хыврĕç.

Иртнĕ çулхи çуракинче районри кашни колхозрах çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акса хăварнăччĕ. Çапла, районри колхозсем ун чухне пурĕ 103 гектар çине тырă акса хăварнă. Çав гектарсем çинче ÿстерсе илнĕ 190 центнер тырра колхозсем йăлтах оборона фондне хыврĕç.

Н. ГЛАДКОВ.



СОВЕТ ЗАПОЛЯРЬИНЧЕ. Укерчĕк çинче: боеприпассем турттаракан пăлансем.

Е. ХАЛДЕЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ют çĕршывсенче

Чан Кай-ши Китай çарĕпе Китай халăхне чĕнсе калани

ЧУНЦИН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Чан Кай-ши Китай халăхĕпе çарне чĕнсе сăмах тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: танмар правăпа тунă договорсем тăрăх США-па Англия Китайра хăйсем нумай вăхăт хушши усă курнă уйрăм правăсене хăйсен ирĕкĕпех пăрахăçа кăларни çинчен иртнĕ çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче пĕлтерчĕç. Çав договорсенчен пĕрне çĕр çул ĕлĕкрех тунă пулнă. Кăçалхи январĕн 11-мĕшĕнче Китай правительстви çав икĕ çĕршывпа çĕнĕ договорсем турĕ. Вăл договорсене пĕртан правăпа тата пĕр-пĕрне хисепленипе туса алă пуснă.

Чан Кай-ши çапла каланă: çак ĕçсемпе Китайăн союзникĕсем хăйсем туса пыракан вăрçăн тĕллевĕ—тĕрĕслĕхпе этемлĕхĕн прависене сыхласа хăварасси пулнине кăтартса пачĕç. «Анчах пирĕн пурин те ăнланас пулать,—тенĕ Чан Кай-ши,—ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăха хамăрăн вăйпа кăна çĕнтерсе илме пулать. Эпĕ сире, пирĕн тăван çĕршыври халăхсем, никама пăхăнманлăха çĕнсе илес ĕçре эпир хамăрăн вăй çине кăна шанма тивĕçлĕ, тесе пĕрре кăна мар каланă. Китай республикин никама пăхăнманлăхне тăвас тесен, наци вăйлă пулмалла». Китаецсем халиччен,—тенĕ малалла Чан Кай-ши,—ют çĕршывсемпе тунă танмар договорсем Китай государствине тăвас ĕçе чăрмантарнă, китаецсем хушшинче харкашу кăларнă, экономика енчен ÿсе пыма чăрмантарнă, эпир вăйсăррине, туйтарса тăнă, тесе чăннипех те калама пултарнă. Халĕ, çав танмар правăллă договорсене пăрахăçа кăларнă хыççăн, çавăн пек шухăшсем пĕтеççĕ. Халĕ Китай Англипе тата США-па пĕртан правăсемпе усă курса çыхăнса тăрать. Никама пăхăнман Китай çав икĕ наципе чăн-чăн тусĕ пулса тăчĕ. Ытти халăхсемпе çыхăнса тăрас ĕçре китаецсем яланах тĕрĕслĕхлĕ принципсемпе усă курнă. Чан Кай-ши китаецсене пурне те вăрçă в[illegible]тĕнчи хăйсен йывăр обязанноçĕсене пурнăçа кĕртсе пыма тата никама пăхăнманлăха çĕнтерсе илес, Китай республикин ашшĕ Сун Ят-Сен кăларса тăратнă виçĕ никĕс çинче çĕнĕ государство тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйя хурса ĕçлеме чĕннĕ.

ЧУНЦИН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англипе США Китайра уйрăм правăсемпе усă курассине пăрахăçа кăларасси çинчен Англипе Китай тата Америкăпа Китай договор туса алă пуснă май, Китайра çапла калаççĕ: Китайпа танмар правăллă договорсем тăрăх çыхăнса тăнă державăсем хушшинче патша Российи те пулнă. Анчах та Октябрьти революци çĕнтернĕ хыççăнах Совет правительстви хăй ирĕкĕпех тата хăй пуçарса, Китайпа тунă танмар правăллă договорсене тата хăйĕн Китайри привилегийĕсене пăрахăçа кăларасси çинчен пĕлтерчĕ, çакна Советпа Китай хушшинче 1924 çулта тунă килĕшÿпе çирĕплетсе панă. Çакă вăл Китайăн пĕртанлăхĕпе никама пăхăнманлăхне йышăнса аслă державăпа Китай тунă пĕрремĕш договор пулнă.

КИТАЙ ТЕРРИТОРИЙĔПЕ США УСĂ КУРМАЛЛИ ПРАВĂНА ПĂРАХĂÇА КĂЛАРАССИ ÇИНЧЕН США-па КИТАЙ ДОГОВОР ТУСА АЛĂ ПУСНĂ

ВАШИНГТОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственный секретарĕ Хэлл тата Китай посолĕ Вэн Дао-Мин договор туса алă пуснă, çав договор тăрăх США хăй Китай территорийĕпе усă курма пултарас уйрăм правăна пăрахăçа кăларать.

АМЕРИКА МИССИЙĔ ÇУРÇĔР АФРИКĂНА КАЙМА ХАТĔРЛЕНЕТ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çывăх вăхăтрах Çурçĕр Африкăна Америка миссийĕ каяссине кĕтеççĕ, вăл Çурçĕр Африкăра халăха пулăшас ĕçе организацилеме каймалла.

Де Голль часах Жиро генералпа курнăçса калаçать

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕн çакăн пек пĕлтерĕвне сарать: французсен официальнăй представителĕ каланă тăрăх, де Голль часах Жиро генералпа курнăçса калаçать.

Америкăн „Караван“ ятлă самолетне сăнани

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри «Кертисс—Райт» ятлă авиаци компанин представителĕ икĕ моторлă военно-транспортнăй самолета, «Караван» ятлăскере, сăнас ĕç вĕçленни çинчен пĕлтернĕ. Çав самолета йывăçран çеç тунă. Унăн конструкцине вăрçă пуçлансанах тума тытăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сахăр кăшманĕ лартса ÿстерес ĕç çинчен

Сахăр кăшманне Чăваш республикинче 1930 çултах лартма тытăннă, анчах ун чухне ăна сахал лартса ÿстернĕ, пуринчен ытларах уйрăм колхозниксем хăйсен кил-вырăнĕсенче лартса тунă. Улатăр хулинче çак культурăпа Никифоров интересленнĕ, вăл хăй акса тунă сахăр кăшманĕн вăрлăхне колхозницăсене парса тăнă. МТС директорĕ Иванов юлташ каланă тăрăх, Хĕрлĕ Чутай районĕнче те сахăр кăшманĕ лартса тăвас тĕлĕшпе опытсем туса ирттернĕ. Опытсем начар мар результатсем панă. 1941 çулта Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн вĕренÿ хуçалăхĕнче опыт тăвас майпа чи малтанхи хут сахăр кăшманĕ лартнă. Çак опыта 1942 çулта тата анлăраххăн туса ирттернĕ. Çав опытсем сахăр кăшманне хирте лартсан та, агротехникăн вăтам условийĕсенчех гектартан 240—260 центнер туса илме май пуррине çирĕппĕнех кăтартса панă. Иртнĕ çулта колхозсен уйхирĕсене сахăр кăшманне çĕршер гектар лартса хăварнă.

Иртнĕ çулта сахăр кăшманĕн вăтам тухăçлăхĕ республикăра гектартан 75 центнера яхăн пулчĕ. Сахăр кăшманĕ çакăн пек пĕчĕк тухăçлă пулни çапах та пирĕн патра ăна пысăк тухăçлăхпа туса илме май çук тесе шухăшлама сăлтав памасть. Сахăр кăшманне акса тумалли меслетсене пăхса тухни çакна кăтартса парать: чылай колхозсенче сахăр кăшманне лартса тумалли агротехникăна пĕлмен пирки ăна пăснисем пулнă, çакă вара сахăр кăшманĕ тухăçсăр пуласси патне илсе пынă. Агротехникăна пăсни — акмалли çĕре удобренисемпе çемçетменнинче, кая юлса июнь уйăхĕнче тин акнинче, алăпа акнинче, сахăр кăшманĕн калчисене питĕ начар пăхса ÿстернинче пулнă. Çаксене пула сахăр кăшманĕн тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулнă. Çав вăхăтрах сахăр-кăшманĕ удобренисем нумай ыйтать, тислĕк тата минераллă удобренисем тăкса çĕре çемçетмесĕр, сахăр кăшманне хирти условисенче туса илме çук. Удобренисене сахăр кăшманне акас умĕн тăкмалла е унăн калчисене апат памалла.

Вăхăтра, тăпра 7—8 градус таран ăшăнса çитсен, акасси сахăр кăшманне ăнăçлăн туса илмелли условисем пулса тăрать. Чи лайăх срокчен 5—6 кун кая юлса акниех кашни гектартан 20—30 центнер тымар çухатасси патне илсе пырать, татах та каярах юлса акни вара сахăр кăшманĕн тухăçлăхне питĕ вăйлăн чакарать. Сахăр кăшманне алăпа акма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен ăна тĕштырă акмалли сеялкăсемпех акма пулать. Çакă вара ака ĕçне кĕске вăхăтра туса ирттерме май парать.

Хăшпĕр колхозсенче сахăр кăшманне пăхса ÿстерме тăрăшманнине уйрăмăнах палăртса хăварас пулать. Вăл колхозсенче сахăр кăшманне акнă вырăнсенче çумкурăкĕсем питех те нумай пирки унта мĕн акнине те пĕлме çук. Çавна пула сахăр кăшманĕн калчисем е пачах пĕтсе ларнă, е вĕсен тухăçлăхĕ питех те сахал пулнă.

Сахăр кăшманне лайăх пăхса ÿстерес пулать, ăна çумласа сайралатас пулать, ретсем хушшинчи çĕре çу касиччен сахалтан та 3—4 хут кăпкалатас пулать. Çакăн пек туса пырсан кăна сахăр кăшманĕ пысăк тухăçлă пуласси шанма пулать. Сахăр кăшманне лайăх пăхса ÿстерсе, эпир Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн вĕренÿ хуçалăхĕнче удобренисем тăкман çĕр çинчех гектартан 150—180 центнер тымар туса илтĕмĕр.

Чăваш республикинче сахăр кăшманне пысăк тухăçлăхпа туса илме çителĕклĕ майсем пур. Çакна чылай районсенчи малта пыракан колхозсен примерĕ кăтартса парать. Вĕсем 1942 çулта гектартан 250—300 центнер таран туса илнĕ. Тĕслĕхрен, Кувакино районĕнчи «Бригадир» колхоза илме пулать, вăл гектартан 300 центнер ытла туса илнĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Красный бригадир» колхоз 240—250 центнер, Куславкка районĕнчи «Красный Курган» колхоз та çавăн чухлех туса илнĕ. Çак колхозсенче сахăр кăшманне акмалли участоксене тĕплĕн суйласа илнĕ тата агротехникăна лайăх пурнăçа кĕртсе пынă. Çавăнпа та результачĕ те лайăх пулнă. Ялхуçалăхĕнчи работниксен научнăй конференцийĕ Чăвашсен ялхуçалăх институтне çак колхозсен опытне вĕренме тата вăл опыта 1943 çулта сахăр кăшманĕ акакан ытти колхозсене куçарма хушса хăварчĕ.

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ.

Махорка памалли плана тултармалла

Тăвай районĕнчи чылай колхозсем кăçал махорка лартса турĕç. Махорка пур колхозсенче те вăйлă пулчĕ. Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» тата Кивĕ Пуянкассинчи «Социализм» колхозсем кашни гектартан вăтам шутпа 18 центнер ытла махорка туса илнĕ. «Красная Чувашия» колхоз кăçал государствăна 35 центнер махорка пачĕ.

Çав вăхăтрах государствăна махорка парас тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Нюшкассинчи Максим Горький ячĕпе тăракан, Уразкассинчи «Ĕçлĕх çулĕ», Элпуçĕнчи «КИМ», Улянкăри «Шурăмпуç», Йăнтăрчри «Çулăм», Çăлпуçĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозсем халĕ те государствăна махорка парса татман.

Государствăна махорка парас ĕçе халех вĕçлес пулать.

В. ИЛЬИН.

Чувашдревпромсоюзу для работы в аппарате требуются: специалисты (инженеры и техники) по лесохимии, мебельному производству, механической обработке дерева, по лесопилению, по культхудожественным изделиям, по строительству, механик по силовому хозяйству, начфинотдела, главный и старший бухгалтера, пожарный инспектор, оргинструктор.

Обращаться: г. Чебоксары, Заводская, 12, Отдел кадров.

Управлению ЧувашгосСтраха требуются на работу: секретарь-машинистка (для работы в Управлении Госстраха) и ст. бухгалтера (для работы в районах ЧАССР).

Обращаться: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом № 10.

Чувашгосстрах.

В связи с окончанием бюджетного года, Чувашпромкасса просит промартели представить расчетные ведомости по страховым начислениям за декабрь м-ц 1942 года и не позднее 25 января 1943 года произвести выверку взаимных расчетов за 1942 год.

После указанного срока никакие претензии приниматься не будут.

ЧУВАШПРОМКАССА.

2—2.

Заводу требуются:

инженеры-технологи и техники-технологи по холодной обработке металла, конструктора, чертежники, бухгалтера, снабженческие и складские работники, художник.

Требуются рабочие следующих квалификаций: токари револьверщики, фрезеровщики, строгальщики, шлифовщики, автоматчики, волочильщики, термисты, электро-монтеры, слаботочники, телефонистки, браковщики, ящечники, упаковщики, слесаря-инструментальщики, слесаря по ремонту, автослесаря, шоферы, резчики металла, жестянщики, шорники-смазчики, плотники, столяры, каменщики, штукатуры, печники, кровельщики, истопники, дворники, подсобные рабочие, уборщицы, курьеры, возчики, грузчики (возчики и грузчики обеспечиваются общежитием и теплой спецодеждой).

Срочно требуются ассенизаторы (оплата по соглашению, предоставляется общежитие).

Принимаются ученики от 14 лет. За время обучения ученики получают оплату в размере 150—200 руб. и норму снабжения по категории рабочих.

Требуются вахтеры и пожарные работники (мужчины и женщины). Предоставляется общежитие.

Обращаться: ул: Карла Маркса, 80. Бюро пропусков, от 11 до 3 часов дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1213

Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 53. 84 п.